*Пежирова Тамара Александровна*
*воспитатель дошкольной группы*
*МБОУ «Кильдюшевская СОШ*
*Яльчикского муниципального округа»*

**Шкулччenхи вĕренӳ учрежденийĕсенче ĕçлекенсемпе пуçламăш шкул учителĕсен вĕренӳ çыхăнулăхне йĕркелемелли ĕç содержанийĕ**

Шкулччenхи тата пуçламăш шкул ӳсĕмĕнчи ачасен вĕренĕвне вĕçе-вĕçĕн, çыхăнуллă йĕркелемелли задачăна татса пама психологи тата педагогика тĕлĕшĕнчен тивĕçлĕ условисем кирлĕ.

Çитĕннисем ачасемпе ĕçленĕ чухне кашнин пайăр уйрăмлăхĕсене шута илмелле. Кашни ачана хăй кăмăлланă ĕçе, ĕçри юлташне, хатĕрсене т.ыт.те суйласа илме май памалла. Ача ĕçĕн ăнăçлăхне хак панă чухне вăл малтан ĕçленипе танлаштарсан халĕ мĕнле ӳсĕм тунине тĕпе хумалла.

Вĕренĕве йĕркеленĕ май ачан кăмăл-туйăмне çĕклентерме тăрăшмалла, ăна обществăри хăйĕн вырăнне ăнланса илме пулăшмалла, пĕлӳлĕх тата илемлĕх тĕлĕшĕнчен аталантарма тимлемелле. Ача аталанăвне йĕркелемелли ĕçсенчен тĕп вырăнта вăйă тăнине асра тытмалла, вĕренӳ ĕçне пуçласа янă чухне вăйă формипе анлăн усă курмалла; палăртнă задачăсене ăнланса йышăнмалла, вĕсен содержанийĕн тĕп принципĕсене ĕçе кĕртме, юхăмне тĕрĕслесе тăма,  задача епле пурнăçланнинне тĕрĕс хак пама пĕлмелле.

Евĕрлесе ĕçлессине( тĕслĕхе кăтартнă пек япала туни) шыравлă, творчествăллă ĕçпе çыхăнтарма, ачасене ушкăнпа тата пĕчченшерĕн, куçăмлă тата куçăмсăр майпа выляма, ĕçлеме хăнăхтармалла.

Шкулччenхи вĕренӳ учрежденийĕсемпе пуçламăш шкулсен ĕçне вĕçе-вĕçĕн çыхăнтарасси виçĕ çул-йĕрпе пурнăçланса пырать.

**Пĕрле ĕçлемелли тĕп тĕллевсене палăртни**

Ку ĕç виçĕ шайри çыхăнусенче пулса пырать: «ача сачĕн заведующийĕ-шкул директорĕ-попечительсен канашĕн ĕç тăвакан директорĕ», «аслă воспитатель-кĕçĕн классен завучĕ-психолог-социаллă педагог-ашшĕ-амăшĕ комитечĕн представителĕ», «воспитатель-учитель-медицина ĕçченĕ-ашшĕ-амăшĕ».

ДОУ ĕçченĕсен тата пуçламăш шкул учителĕсен пĕрлехи методика вĕренĕвне йĕркелемелле. Шкулта та, ДОУра та ача ашшĕ-амăшĕн пĕрлехи пухăвĕсене, уçă алăк кунĕсене ирттермелле, ДОУ попечителĕсен канашĕн ларăвĕсене хутшăнмалла, пĕрлехи ĕçĕн планĕсене хатĕрлемелле, килĕштерсе ĕçлемелли килĕшӳ тумалла. Ачасене шкулта вĕренме хатĕрлес ыйтусене сӳтсе явма педагогика канашĕн пĕрлехи ларăвĕсене ирттермелле, ачасен ӳсĕм уйрăмлăхĕсене , ача садĕнчи шкула куçнă май палăракан психологи йывăрлăхĕсене çутатса паракан лекцисене пĕрле итлемелле. Ашшĕ-амăшĕсем хăйсен ачисен пулас вĕрентекенĕсемпе тĕл пулмалла. Воспитательсем тата учительсем валли психологи тата хутшăну ыйтăвĕсемпе пĕрлехи тренингсем ирттермелле.

**Ача ашшĕ-амăшĕпе ĕçлени**

Ашшĕ-амăшне шкулччченхи учрежденин тата пуçламăш шкулăн воспитанипе вĕренӳ ĕçĕнчи майĕсемпе тĕплĕн паллаштармалла: занятисене, уроксене пырса курассине йĕркелемелле, вĕренӳ учрежденийĕн уйрăмлăхĕсем çинчен даннăйсен банкĕ пухса хатĕрлемелле, «Уçă алăксен кунĕсене»ирттермелле, информаци стенчĕсем хатĕрлемелле.

Ашшĕ-амăшĕн пухăвĕсенче, кулленхи хутшăнура 6-7 çулхи ачасен ӳсĕм уйрăмлăхĕсене ăнлантармалла, 7 çулхисен пысăк улшăнăвĕсем пирки асăрхаттармалла. Ашшĕ-амăшĕн ĕçне килĕшерсе йĕркелемелле (ача валли кружок суйласа илме, хушма занятисем валли кирлине хатĕрлеме пулăшмалла, канмалли кунсенче ачана мĕн ĕçлеттермеллине йĕркелемелле т.ыт.те).

Ашшĕ-амăшне ачасен ӳт-пӳ тата ăс-тăн аталанăвне çирĕплетекен документсем хатĕрлеме психологи тата педагогика енчен пулăшмалла. Вĕсене ача шкулти пурнăç йĕркине кĕнĕ май пулакан йывăрлăхран тухма канашсем памалла. Ачана шкула кайма хатĕрленĕ тапхăрта кил-йышри çынсен кăмăл-туйăмĕ епле пулнине сăнамалла (анкетăсем салатмалла, ыйтса пĕлмелле, тестсем ирттермелле). Шкулччченхи ӳсĕм ачисен тата шкула куçнă ачасен ашшĕ-амăшĕпе тренингсем тата вăййă хăнăхтарăвĕсем ирттермелле.

**Пĕрлехи ĕçсене яланхи йĕркене кĕртсе çирĕплетни**

Шкулччченхи учрежденисене пĕтерекенсен кунĕсене палăртмалла. Ачасемпе ĕçлемелли усăллă мелсемпе усă курмалла: ДОУ пĕтернисемпе тĕл пулусем ирттермелле, Пĕлӳ кунне хутшăнмалла, сентябрĕн 1-мĕшĕнчи уяв линейкинче пулмалла. ДОУ вĕренекенсен малашнехи шăпине асăрхаса пымалла, вĕсем пĕрремĕш класра вĕренме епле хăнăхса çитнине, мĕнле паллăсем илнине шута илсе тăмалла.

Ача садĕсенчен шкула куçнă ачасемпе тĕрлĕ вăхăтра (кĕркунне, хĕлле, çуркунне) ĕçлессине йĕркелемелле: спорт ваййисем, уявсем, «Сывлăх кунĕсем». Творчество мастерскойĕнче çут çанталăк материалĕсенчен тĕрлĕрен тетте япаласем ăсталамалла, ӳкерчĕксен выставкине йĕркелемелле, шкул ачисем ача садĕнче пĕчĕк спектакльсем кăтартмалла, кулăш кунĕнче кăтартма концерт хатĕрлемелле, çут çанталăка сыхлама пĕрле вăй хумалла, сăмахран, çăл куçсене тасатни.

Çак ĕçсене пурнăçлама ДОУ ĕçченĕсем те, шкулта вĕрентекенсем те хутшăнаççĕ. Вĕсенчен нумайăшне ДОУ тата шкул педагогĕсем хатĕрлекен «Ĕç пулнă вырăнтан», «Ача куçĕпе курсан» йышши «куçăмлă» журналсенче евĕрлеме пулать. Вĕсене «Çемье тата эпĕ» текен клубра та сӳтсе явни вырăнлă. Йывăр лару-тăрура пурăнакан çемьесене палăртас, вĕсемпе ĕçлес енĕпе уйрăмах тимлемелле. Ачасемпе тата вĕсен ашшĕ-амăшĕпе пĕрле занятисем ирттерни те пысăк усă парать(пухусем, ятарлă уйрăм консультацисем т.ыт.те). Ку вăл педагогсен коррекции пулăшăвĕ памалли ачасемшĕн уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Ача сачĕпе шкул  асăннă виçĕ çул-йĕрпе килĕшӳллĕн ĕçлесе пымалли пĕрлехи план хатĕрлеççĕ. Вăл икĕ пайран тăрать: пĕрремĕшĕ-воспитатель, учитель тата ашшĕ-амăшĕ пĕрле тумалли ĕç содержанийĕ, иккĕмĕшĕ- ачасене шкул пурнăçĕпе паллаштарасси.

Шкул умĕнхи ушкăн воспитателĕпе пĕрремĕш класс учителĕн пĕрлехи ĕçĕ пĕр-пĕрин ĕçĕпе паллашнинчен, ачасем мĕнле условисенче вĕренсе пурăнассине сӳтсе явнинчен пуçланать.  Воспитатель учителе ачасен пайăр уйрăмлăхĕсемпе, кăмăл туртăмĕпе паллаштарать. Ачасемпе темиçе çул хушши ĕçлесе, вĕсене асăрхаса пырса ăнланнине воспитатель учителе пĕлтерме, кашни ача тĕлĕшĕпе воспитанипе вĕренĕвĕн мĕнле мелĕпе усă курма вырнаçуллине кăтартма, уйрăм кил-йышра ачасене лайăх е япăх пăхса ӳстерни çинчен каласа пама пултарать. Çакна пĕлни учителĕн малашнехи ĕçĕшĕн питĕ усăллă пулать, çĕнĕ вĕренекенсене хăвăртрах пĕлсе çитме май парать.

Пĕрлехи ĕç планĕпе çакна палăртмалла: учительпе вопитатель ача садĕнчи занятисемпе шкулти уроксене пĕрле  çӳрени, ĕç формисемпе тата мелĕсемпе паллашни, педагогика канашĕсен ĕçне хутшăнни, пĕр-пĕринпе канашлани, ача ашшĕ-амăшĕн пухăвĕсене, конференцисене пĕрле ирттерни. Шкулчченхи учрежденири тата пуçламăш шкулăн пĕрремĕш класĕнчи вĕренӳ программисене танлаштарса тишкерни, ачасем шкула куçсан воспитатель  унта çӳрени, вĕсен пурнăçне тишкерни питĕ усăллă.

Çапла ĕнтĕ, ача сачĕпе шкул хушшинче вĕçе-вĕç çыхăну йĕркелемелли чи кирлĕ услови вăл-вопитательпе учитель пĕр-пĕринпе ырă кăмăллăн хутшăнса ĕçлени.

Планăн иккĕмĕш пайĕ-ачасене шкулпа паллаштарасси. Воспитатель шкул умĕнхи ушкăн ачисемпе пĕрле вĕсем вĕренес шкула кайма палăртать. Пĕрремĕш хут шула сентябрĕн пĕрремĕшĕнче кайма юрать. Ачасем воспитательпе пĕрле çĕнĕ вĕренӳ çулĕн пĕрремĕш кунĕнче ирттерекен савăнăçлă мешехене кураççĕ. Тен, пĕрремĕш класра вĕренес ачасем йышĕнче ача садĕнчен пĕлтĕр вĕренме килнĕ пĕлĕшсем те пулĕç. Шкула кайса килнĕ хыççăн ачасене вĕсем хăйсем те тепĕр çулхине çавăн пек уява хутшăнма пултарни çинчен калама юрать.

Шкула тепĕр хут кайнин тĕллевĕ шкулти вĕренӳ содержанийĕпе тӳррĕнех паллашасси пулма пултарать. Ачасене тӳрех урока илсе кайиччен шкул библиотекипе паллаштарни усăллă. Çавăн хыççăн унта тăтăшах пырса çӳреме, кĕнекесем илсе ача садĕнче вулама е шкулти вулав залĕнче ачасем мĕнле ĕçлесе ларнине кăтартма, унтан физкультура занятийĕ ирттерме юрать. Шкулти акт залĕнче вĕренекенсемм валли спектакль ирттернĕ чухне унта та кайса курма пулать. Çавăн пекех пушă класа кĕрсе ачасене партăсем хушшинче мĕнле лармаллине  ăнлантарни усăллă.  Май уйăхĕнче учитель пырса ачасемпе шкул çинчен калаçу ирттерни те аван пулмалла. Çак пĕтĕм ĕçе çулталăк тăршшĕнче виçеллĕ йĕркелесе ирттермелле, анчах вăл ытла нумай пулмалла мар-ачасене кайран пĕлмелли те çителĕклĕ пултăр. Ача çĕнĕ çуртран ан хăратăр, анчах йăлт хăнăхса та ан çиттĕр, унсăрăн уншăн шкула кайни асамлă, илĕртӳллĕ çĕнĕлĕх пулмасть.

Шкулчченхи вĕренӳ учрежденийĕсенче вăй хуракансен тата пуçламăш шкул учителĕсен педагогика ĕçĕнче çак тĕллевсем пысăк вырăн йышăнаççĕ.